26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус

1944
МАРТ
24
ЭРНЕКУН
59(6554) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне КОНЕВА

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, çаплах наступлени туса пырса, паян, мартăн 22-мĕшĕнче, икĕ кун хушши вăйлă çапăçнă хыççăн, ПЕРВОМАЙСК хулине — паха чугун çул узелне тата нимĕçсен оборонин Кăнтăр Буг шывĕн вăтам тăрăхĕнчи вăйлă тĕреклетнĕ пунктне туртса илнĕ.

ПЕРВОМАЙСК хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче ЖАДОВ генерал-лейтенантăн, ШУМИЛОВ генерал-полковникăн, РОДИМЦЕВ генерал-лейтенантăн, ЛЕБЕДЕНКО генерал-майорăн, АКИМЕНКО генерал-майорăн, МОРОЗОВ генерал-майорăн, БАКЛАНОВ генерал-майорăн, ЛИЛЕНКОВ генерал-майорăн çарĕсем, артиллери генерал-майорĕн ПОЛУЭКТОВĂН артиллерисчĕсем тата танковăй çарсен генерал-майорĕн КАТКОВĂН танкисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ПЕРВОМАЙСК хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене «ПЕРВОМАЙСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 22-мĕшĕнче, 21 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕрçирĕм тăвата тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, ПЕРВОМАЙСК хулине туртса илнĕ УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, ПЕРВОМАЙСК хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи мартăн 22-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАРТĂН 21-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 21-мĕшĕнче пирĕн çарсем ДУБНО хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре çаплах наступлени туса пынă. Ровно облаçĕнчи ВЕРБА район центрне, ЛЬВОВ облаçĕнчи ПОДКАМЕНЬ район центрне тытса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса ытти 60 яла ытла йышăннă. Вăл шутра — СТОЛБЕЦ, ГРАДА, БУЧИНА, СУХОВОЛЯ, НАКВАША, НЕМЯЧ, ЛОПУШНА ятлă пысăк ялсем.

ВИННИЦА хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан 50 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра—СУСЛОВЦЫ, БАГРИНОВЦЫ, БОРКИВ, МИКУЛИНЦЫ, ДАШКОВЦЫ, ЮЗВИН, МЕДВЕЖЬЕ УШКО, ШИРОКАЯ ГРЕБЛЯ, БРАИЛОВ, КОРОСТОВЦЫ, СТЕПАНКИ, КУДИЕВЦЫ, НОСКИВЦЫ ятлă пысăк ялсем тата БРАИЛОВ, МАТЕЙКОВО ятлă чугун çул станцийĕсем.

ЖМЕРИНКА хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем, наступление вăйлатса пырса, Винница облаçĕнчи район центрĕсене — ШАРГОРОД хулине тата КОПАЙГОРОДА туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 80 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ПАСЫНКИ, МОВЧАНЫ, ПЛЕБАНОВКА, СНИТКОВ, ВЫСШИЙ ОЛЬЧЕДАЕВ, ЛУЧИНЕЦ, ЛАЗОВА, ТРОПОВО, СУГАКИ, ВЕНДИЧАНЫ, ЛОМОЗОВ ятлă пысăк ялсем тата КОТЮЖАНЫ, НЕМЕРЧИ, ВЕНДИЧАНЫ, ИЗРАИЛЕВКА, СУЛЯТИЦКАЯ ятлă чугун çул станцийĕсем.

МОГИЛЕВ-ПОДОЛЬСКИЙ хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах ДНЕСТР шывĕн сылтăм енчи плацдармĕсене аслăлатассишĕн ăнăçлăн çапăçнă, Молдаван ССР-ĕн АТАКИ ятлă район центрне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — АРКОНЕШТЬ, ВИСОКА, КОТОВА, МЫНДЫК, ДРОКИЯ, ШУРЕЛИ, КЕТРОСЫ, ЗГУРИЦА ятлă пысăк пунктсем. Пирĕн çарсем БЕЛЬЦЫПА ЧЕРНОВИЦЫ хушшинчи чугун çула татнă.

НОВО-УКРАИНКА хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла тапăнса пынă. Одесса облаçĕнчи БЛАГОДАТНОЕ, АРБУЗИНКА ятлă район центрĕсене туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — СИНЮХИН БРОД, НОВО-АЛЕКСАНДРОВКА, ЛЫСАЯ ГОРА, СОФИЕВКА, НИКОЛЬСКОЕ, НОВОКРАСНОЕ, ДЕМИДОВКА, ИВАНОВКА, АЛЕКСЕЕВКА ятлă пысăк ялсем тата СИНЮХИ, ПОДГОРОДНАЯ, БАНДУРКА, НОВО-КРАСНОЕ, КАВУНЫ ятлă чугун çул станцийĕсем.

БОБРИНЕЦ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса çаплах малалла тапăнса пынă. 40 ял ытла йышăннă. Вăл шутра — НОВОСЕЛОВКА, НИКОЛАЕВКА, ЗЕЛЕНЫЙ ЯР, ТРИКРАТЫ, ВОЗНЕСЕНСКИЙ, ВОРОНОВКА ятлă пысăк ялсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Мартăн 20-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче тăшманăн 29 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 47 самолетне персе ӳкернĕ.

МАРТĂН 22-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 22-мĕшĕнче пирĕн çарсем КРЕМЕНЕЦ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе тата унăн контратакине сире-сире ярса, çаплах малалла тапăнса пынă, темиçе ял туртса илнĕ.

ВИННИЦА хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 30 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра — ВЕРБКА, БОХНЫ, БЕЛЕЦКОЕ, САХНИ, МАЙДАН-СОВИН, СТАМПИВКА, ЛЫСА ГОРКА, ПОЧАПИНЕЦ, ЛЫСЕНКА, ЛЮДОВКА, СЕВЕРИНОВКА, МАНЬКОВЦЫ, МАЛЬЧЕВЦЫ, МАРТЫНОВКА, ВОЛОДИЕВЦЫ ятлă пысăк ялсем тата БАР, МЫТКИ, КОПАЙ ятлă чугун çул станцийĕсем.

ЖМЕРИНКА хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем Винница облаçĕнчи МУРОВАНЫЕ КУРИЛОВЦЫ тата ЯРЫШЕВ район центрĕсене туртса илнĕ.

МОГИЛЕВ-ПОДОЛЬСКИЙ хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем ДНЕСТР шывĕн сылтăм енчи плацдарма аслăлатассишĕн çапăçнă, халăх пурăнакан 15 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — Молдаван ССР-ĕн НАДУШИТА район центрĕ.

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем мартăн 22-мĕшĕнче, икĕ кун хушши вăйлă çапăçнă хыççăн, ПЕРВОМАЙСК хулине—паха чугун çул узелне тата нимĕçсен оборонин Кăнтăр Буг шывĕн вăтам тăрăхĕнчи вăйлă тĕреклетнĕ пунктне туртса илнĕ.

БОБРИНЕЦ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан 30 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра—СЕМЕНОВКА, ИВАНОВКА, АЛЕКСЕЕВКА, КОНСТАНТИНОВКА, БУГСКИЙ, АЛЕКСАНДРОВКА ятлă ялсем тата КОНСТАНТИНОВКА, ТРИКРАТНОЕ, АЛЕКСАНДРОВКА ятлă чугун çул станцийĕсем.

НИКОЛАЕВ хули енче пирĕн çарсем наступлени туса вăйлă çапăçнă хыççăн КАЛИНОВКА, ГОРОХОВКА, БОГОЯВЛЕНСК, БАЛАБАНОВКА ялĕсене тата ГОРОХОВКА чугун çул станцине туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Мартăн 21-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 27 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 29 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Кременец хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсем, çĕнĕ вăйсем илсе пырса, темиçе хутчен те контратака тунă. Хаяр çапăçусенче пирĕн çарсем тăшмана хĕснĕ, темиçе ял туртса илнĕ. Подзамче ялĕн районĕнче пирĕн чаçсем айккинчен иртсе пырса маневр тунă, нимĕçсен 361-мĕш тата 454-мĕш охраннăй дивизийĕсен подразделенийĕсене çавăрса илнĕ те пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 1.000 вилли ытла выртса юлнă. Тыткăна чылай илнĕ. Хĕçпăшал, автомашинăсем тата çар япалисем нумай тытса илнĕ.

* * *

Жмеринка хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса çаплах малалла тапăнса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă та Винница облаçĕнчи Мурованые Куриловцы тата Ярышев район центрĕсене туртса илнĕ. Тепĕр районра нимĕçсен пехоти контратакăна кĕме хăтланнă. Минометсемпе тата пулеметсемпе вăйлăн персе, гитлеровецсене çĕр çумне лапчăтса лартнă. Çав вăхăтра пирĕн танксем тăшман тылне çĕмĕрсе, нимĕçсен çапăçури речĕсем хушшине çурса кĕнĕ. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен 700 салтакĕпе офицерĕн вилли выртса юлнă.

* * *

Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсем, ăнăçлăн наступлени туса пырса, икĕ кун каярах Первомайск хули патнелле пыракан çулсем çине тухнă. Ку хула Синюха шывĕ Кăнтăр Буг шывĕпе пĕрлешнĕ çĕрте выранта ларать, çавăнпа та ăна хӳтĕлемелли позицисем питĕ лайăх. Тăшман çав позицисене инженерла сооруженисем туса вăйлатнă, хулари чул çуртсенчен туса вăйлатнă, хулари чул çуртсенчен хирĕç тăрса вăрçмалли лайăх узелсем туса хунă, хулана нумай вăхăт хушши хӳтĕлесе тăма хатĕрленнĕ пулнă. Пирĕн çарсем Синюхин-Брод ялне туртса илнĕ-те, кăнтăралла куçса пырса, Первомайск хули тулашне вăркăнса кĕрсе кайнă. Хула урамĕсенче хаяр çапăçу пуçланса кайнă. Çав вăхăт хушшинче советсен ытти чаçĕсем хула патне хĕвелтухăç енчен пырса çитнĕ. Питех те хаяр çапăçусенче нимĕçсен Первомайск хулинчи гарнизонне Кăнтăр Буг шывĕ хĕрне хĕстерсе лартнă та пĕтерсе тăкнă. Темиçе çĕр гитлеровец шыва путса вилнĕ. Первомайск хулине туртса илнĕ чухне пирĕн çарсем трофейăсем нумай тытса илнĕ, тыткăна та нумай илнĕ.

* * *

Бобринец хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та Константиновка ятлă пысăк яла штурмласа туртса илнĕ. Çав çапăçура нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă, темиçе артиллери батарейи, боеприпас склачĕсем тата 30 автомашина тытса илнĕ. Пирĕн ытти чаçсем, чугун çул тăрăх наступлени туса пырса, Александровка ятлă станципе пысăк яла туртса илнĕ, халĕ тăшманпа Вознесенск хули патнелле пымалли вырăнсенче çапăçаççĕ.

* * *

Николаев хули енче пĕр соединени чаçĕсем, Ингул шывĕ тăрăх кăнтăралла куçса пырса хаяр çапăçнă хыççăн, Гороховка ялĕпе чугун çул станцине туртса илнĕ. Çитĕнĕве ӳстерсе пырса, пирĕн боецсем çĕрлехи атакăра нимĕçсене темиçе ялтан хăваласа кăларнă. Николаев хули патне пымалли вырăнсенче тăшман темиçе оборона речĕ туса тултарнă. Пирĕн артиллери темиçе дзот çĕмĕрсе тăкнă, гитлеровецсен 6 артиллери батарейине, пĕр паровоз тата боеприпас турттарса пыракан 15 вагона пĕтерсе тăкнă, нимĕçсене пĕр батальона çити çапаласа янă. в[?]енчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Украинăри партизансен отрячĕ мартăн 3-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле нимĕçсен Винница облаçĕнчи пĕр ялта тăракан гарнизонне сасартăк тапăннă. Совет патриочĕсем 80 гитлеровеца вĕлернĕ. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: тумтир склачĕ, апат-çимĕç склачĕ, боеприпас тиенĕ 6 автомашина. Румынсен самолечĕ Молдаван ССР-ĕнчи пĕр ял хĕррине ирĕксĕр анса ларнă. Çав ял çывăхĕнче кĕрешекен Молдаван партизанĕсем летчиксене вĕлернĕ, самолетне çунтарса янă.

* * *

Николаев хули енче нимĕçсен 370-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 667-мĕш полкăн пĕрремĕш батальонĕ тыткăна параннă. Тыткăна параннă батальон командирĕ капитан Герман Эккерман çапла каласа кăтартнă: «Вырăссем ман батальона çавăрса илчĕç те Ингул шывĕ хĕрне хĕстерсе лартрĕç. Ман умма çакăн пек ыйту сиксе тухрĕ: халĕ манăн мĕн тумалла-ши? Гитлер хушнă пек, вырăссене хирĕç пĕр çын юлмичченех, мĕнпур салтаксене те вĕлерсе пĕтеричченех çапăçмалла-и е тыткăна парăнса хам пурнăça кăна мар, хам алăри салтаксен пурнăçне те çăлса хăвармалла-и? Вара эпĕ хĕçпăшала пăрахса тыткăна парăнма приказ патăм. Часах вырăс офицерĕ тата унпа пĕрле икĕ салтак килчĕç. Вара эпĕ вĕсене 229 салтакпа офицера тата пĕтĕм хĕçпăшала патăм. Эпĕ мĕншĕн çакăн пек турăм-ха? Мĕншĕн тесен эпĕ Германи ку вăрçăра аяла пулассине пĕлсе çитрĕм. Нимĕç çарĕсем темĕн чухлĕ хирĕç тăрса вăрçсан та вĕсем ĕнтĕ мĕн пулассине улăштарма пултараймас çук». Эккерман капитанпа пĕрле иккĕмĕш рота командирĕ Кушацкий лейтенант, виççĕмĕш рота командирĕ Карл Вольте лейтенант тата ытти офицерсем те тыткăна парăннă.

Отечественнăй аслă вăрçă геройĕсем



Совет Союзĕн Геройĕ старши сержант гвардеец-артиллерист Филипп Петрович АХАЕВ.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, Ленин орденĕпе тата «Ылттăн Çăлтăр» медальпе наградăласа Совет Союз Геройĕн ятне париччен Ф. П. Ахаев юлташа нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн çапăçнăшăн Хĕрлĕ Ялав орденĕ, «За отвагу» медаль тата «За оборону Сталинграда» медаль парса наградăланă.

Ф. П. Ахаев юлташ — пирĕн земляк. Вăл Чăваш АССР-ĕн Кувакино районĕнчи Рындино ялĕнче çуралса ӳснĕ.

Г. ШИРОКОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Пушкăрт АССР Верховный Совечĕн Президиумне Пушкăрт АССР Халăх Комиссарĕсен Советне ВКП(б) Пушкăрт Обкомне

Пушкăрт республикинче совет влаçĕ туни 25 çул тултарнă кун ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕ Пушкăрт Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикинчи рабочисене, колхозниксене, интеллигенцие тата Хĕрлĕ Çарти пушкăртсене тăванла салам ярассĕ.

Чĕрĕк ĕмĕр каялла Пушкăрт ĕçсыннийĕсем, большевиксен партийĕ ертсе пынипе, вырăс халăхĕпе пĕрле кĕрешсе, пушкăрт халăхне пусмăрласа пурăннă байсен, турхансен, ростовщиксен, патша чиновникĕсен влаçне сирпĕтсе антарчĕç, совет влаçĕ туса хучĕç. Хĕрлĕ Çарпа алла-аллăн тытăнса кĕрешсе, пушкăрт халăхĕ Колчакпа белогвардеецсен бандисене тата ют çĕршывсенчен килнĕ пусмăрçăсене аркатса тăкрĕ, тăван çĕре захватчиксенчен ĕмĕрлĕхе тасатрĕ.

Совет влаçĕ вăхăтĕнче Пушкăрт республикинче вуншар промышленность предприятийĕ çĕнĕрен туса лартнă е тĕпренех çĕнетнĕ, хăватлă нефть индустрийĕ туса хунă, республикăн çĕр айĕнчи пуянлăхĕсене çĕр çине кăларас ĕç аслăн саралса кайрĕ. Республикăра социализмлă колхоз тата совхоз ялхуçалăхĕ туса хунă, вĕсене темиçе пин тракторпа комбайн панă. Совет интеллигенцийĕн йышлă нацкадрĕсем ӳсе çитĕнчĕç. Пушкăрт культури—форми енчен нациллĕ, ăшчикки енчен социализмлă культура—чечекленсе ӳссе, çӳллĕ пусăма çитрĕ.

Совет Союзĕ фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç туса пыракан Отечественнăй вăрçă кунĕсенче пушкăрт халăхĕ Тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн патриотла тивĕçне лайăх ăнланса илчĕ. Пушкăрт ывăлĕсем — Хĕрлĕ Çар воинĕсем — Тăван çĕршывшăн çапăçнă чухне пушкăрт халăхĕн чаплă боевой йăлисене тивĕçлĕ хастарлăхпа хăюлăх кăтартрĕç. Пушкăрт республикинчи ĕçсыннисем, фронта пулăшас тесе, хăйсен пурнăçне шеллемесĕр ĕçлеççĕ.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çакна çирĕп шанса тăраççĕ: пушкăрт халăхĕ, Совет Союзĕнчи мĕнпур тăванла халăхсемпе пĕрле ĕçлесе, Тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçне пурнăçа кĕртĕ, ылханлă тăшмана аркатса тăкма, пирĕн Тăван çĕршыва фашистла нимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕмпех ирĕке кăларма хăйĕн пĕтĕм вăйне парĕ.

Сывă пултăр Пушкăрт Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ.

ВКП(б) Центральный Комитечĕ.

Пушкăрт АССР-чи колхозниксене, колхозницăсене, ялхуçалăх, вырăнти промышленноçпа промкоопераци работникĕсене, культура, наука тата искусство работникĕсене наградăлани

Ялхуçалăхне, промышленноçпа промкооперацие, культурăпа наукăна тата искусствăна аталантарас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх çаксене наградăланă:

Ленин орденĕпе — Илишевски районри Чеверев ячĕпе тăракан колхоз председательне А. А. Белорусова, Пушкăрт АССР-ĕн Совнарком председательне С. А. Вагапова, Пушкăрт АССР-ĕн Верховный Совет Президиумĕн председательне Р. К. Ибрагимова, ВКП(б) Пушкăрт Обкомĕн пĕрремĕш секретарьне С. Д. Игнатьева тата ыттисене те, мĕн пурĕ 17 çынна;

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе — 54 çынна;

«Знак почета» орденĕпе—91 çынна;

«За трудовую доблесть» медальпе — 115 çынна;

«За трудовое отличие» медальпе 154 çынна наградăланă. (ТАСС)

Тăванла республикăн саламĕ

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн адресĕпе çакăн пек саламлă телеграмма килнĕ:

«Мари АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ, ССР Союзĕн Правительстви сирĕн ĕçĕре пысăк хака хурса, иртнĕ çул вăйлă тырпул туса илнĕшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата укçан иккĕмĕш премине панă ятпа тăванла Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсене саламласа ырă сывлăх сунаççĕ».

Ялти художествăллă пултарулăхăн республикăри смотрĕ

Мартăн 21-мĕшĕнче Шупашкарта ялти художествăллă пултарулăхăн республикăри смотрĕ пуçланчĕ. Смотрăн малтанхи икĕ кунĕ хушшинче Элĕк, Тăвай, Улатăр тата Çĕрпӳ районĕсен коллективĕсем хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç.

Халăх творчестви ӳсĕмĕшĕн тимлĕн тăрăшнă çĕрте художествăллă пултарулăх коллективĕсен идейăллă-художествăллă шайĕ та çӳллĕ вырăнта тăрать. Çакă вăл смотрăн пирвайхи кунĕсенчех уçăмлăн палăрчĕ. Тăвай районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозри Николаевпа Иванов юлташсем ертсе пыракан хор хăйĕн пысăк ăсталăхне кăтартса пачĕ. Коллективăн паха енĕ вăл, чи малтанах, паянхи пурнăçпа пурăннинче пулать. Хорăн репертуарĕнче Хĕрлĕ Çарăн паттăрлăхĕ çинчен, колхоз хресченĕсен патриотизмĕ çинчен калакан произведенисем тĕп вырăнта тăраççĕ. Васильевăпа Михайлова колхозницăсем çырнă такмаксем чăннипех те колхоз хресченĕсен кăльхи тапхăрти пархатарлă туйăмне кăтартса пораççĕ. Уйрăм çынсем те начар мар юрласа, ташласа пачĕç. Васильевăпа Михайлова юлташсем иккĕн юрласа панине, Христофорова юлташ ташласа панине тата Николаев купăспа халăх юррисемпе ташă кĕввисене выляса панине куракансем тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç.

Паллах, коллективăн çитменлĕхсем те пур. Пĕр çитменлĕх—вăл репертуарта чăваш ташшисем пулманни. Апла пулин те, Киров ячĕпе тăракан колхозри коллективăн руководителĕсем халăх хушшинчи художествăллă пултарулăх ĕçне çĕклессишĕн тăрăшса ĕçленине курăнать. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл коллектив смотрта отлично паллă илме пултарчĕ.

Улатăр тата Çĕрпӳ районĕсенчен килнĕ коллективсем те смотра лайăх хатĕрленни палăрчĕ. Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозри драмкружок Левинăн «Анютины глазки» ятлă пĕр актлă пьесине начар мар вылярĕ. Уйрăмăнах Смирнова колхозница лейтенант амăшĕн рольне лайăх вылярĕ. Колхозник Евгений Шугуров халăх юррисене баянпа питĕ ăста выляса пачĕ. Çĕрпӳ районĕнчи «1905 год» колхозăн хорĕ Совет Союзĕн гимнне тата халăх юррисене нумай юрласа пачĕ. Хорăн паха енĕ — хорта юрлакансем искусство ĕçне чĕререн юратнинче. Хор пултарулăхĕнче унăн руководителĕ И. Иванов юлташ тимлĕн ĕçлени уçăмлăн курăнать.

Пачах та урăхла, халăх творчествине çĕклессишĕн тăрăшман çĕрте художествăллă пултарулăх коллективĕсен ĕçĕсем те начар. Куракансем Элĕк районĕнчи коллектив лайăх номерсем парассине кĕтрĕç. Ку тĕрĕс, мĕншĕн тесен вăл коллективра пуринчен ытла культура работникĕсем. Анчах кĕтни тӳрре тухмарĕ. Коллектив идейăпа художество тĕлĕшĕнчен кайра тăрать.

Юлашкинчен çакна каласа хăвармалла: Халăх Творчествин çурчĕпе унăн начальникĕ Лисков юлташ смотра килекен коллективсене йышăнса илес тата квалификациллĕ пулăшу парас ĕçе тивĕçлипе организацилемен.

Художествăллă пултарулăх смотрĕн тĕп задачи художествăллă пултарулăх коллективĕсене идейăпа художество тĕлĕшĕнчен пулăшасси пулать. Смотр ялти коллективсемшĕн чăн-чăнах шкул пултăр.

Поляк халăхĕн историйĕнчи чаплă куна паллă туни

Поляк патриочĕсен союзĕ, мĕнпур славянсен комитечĕ хутшăннипе, мартăн 24-мĕшĕнче Мускавра, Союзсен çурчĕн Колоннăй залĕнче, чаплă лару туса ирттерет. Ăна поляк халăхĕ ирĕке тухассишĕн Тадеуш Костюшко ертсе пынипе восстани туни 150 çул тултарнă ятпа тăваççĕ. Çав ларура совет интеллигенцийĕн тата славянсен общество деятелĕсен представителĕсем сăмах тухса каласçĕ. (ТАСС).

Атăл çинче пароходсем çӳреме пуçланă

Атăлăн анатри пайĕнче пăр кайса пĕтнĕ. Пароходсем çӳреме пуçланă. Астраханьрен Сталинград еннелле пĕрремĕш грузовой пароход тухса кайнă. Пассажирсене лартса çӳрекен пароход Сталинградри портран Астрахань еннелле к[?]. (ТАСС).

Чăваш АССР-ĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VII-мĕш Сессийĕ

Чăваш АССР-ĕн 1944 çулхи бюджечĕ çинчен тухса каланисем

К. И. Иванов депутатăн сăмахĕ

(Катек суйлав округĕ)

Депутат юлташсем! Чăваш Автономиллĕ Совет Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕн VII-мĕш Сессийĕ пирĕн паттăр çарсем нимĕçсен фашистла захватчикĕсене çĕнтерсе чаплă çĕнтерӳсем тунă вăхăтра пуçса иртет. Тăван çĕршывăн ывăлĕсем вырăнсем кĕрешӳсенче геройла Хĕрлĕ Çар ретĕнче çапăçакан тата тыла мĕнпур вăй хурса хĕрӳллĕн ĕçлекен ывăл-хĕрĕсем хăйсен Тăван çĕршывĕшĕн ырăпа кĕрешӳре историе сахал мар чаплă страницăсем çырса хучĕç.

Фашистла вăрă-хурахсен кĕтĕвĕсем пирĕн Тăван çĕршыва мĕн чухлĕ асаплăх кӳрсе килнине çырма та кăтартма та çук. Халĕ те вĕсем, Хĕрлĕ Çар хăваласа пыра-пыра çаплипех каялла чакса, хăйсем [illegible] пулнине тăрăхса, пирĕн тăван [illegible] пĕре-пĕре вĕлереççĕ, чурана хăвала-хăвала каяççĕ, тыткăна лекнисене тискеррĕн асапланатараççĕ. Нимĕçсем пĕтерсе хунă ялсем кĕлĕсене, хуласем ишĕлчĕкĕсене, пере-пере пăрахнă тата çунтарса янă хĕрарăмсемпе ачасен виллисене эпĕ хам куçпа куртăм. Хам аллăмсемпе хăпăта-хăпăта илтĕм эпĕ суртсен стенисем çумĕнчен нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсен тискер приказĕсене. Вĕсем унта совет çыннисене гитлерла комендантсене, полицейскисене тата фашистла ытти ирсĕрсене чуралла пăхăнма хушаççĕ.

Совет халăхĕ çак вăрçăра тĕрĕсленине чаплăн тӳссе ирттерчĕ. Унра Ленин — Сталин партийĕ çитĕнтернĕ питех те чаплă ĕçсем халĕ пĕтĕмпех яр-уççăн палăрчĕç. Эпир юнлă гитлеризма çĕнтеретпĕр. Фашистла вăрă-хурахла ушкăнсене пыра-пыра çапас ĕçе кунран-кун вăйлатса пырассине эпир çирĕппĕн шанса тăратпăр, пирĕн мухтавлă тыл фронта пулăшас ĕçе кунран-кунах вăйлатса пыма хатĕр тăрать.

Депутат юлташсем! Чăваш АССР-ĕн 1944 çулхи бюджечĕ республикăн вăрçă вăхăчĕ хушнă пек урăхлатса йĕркеленĕ халăх хуçалăхĕ хăватлăн ӳссе пынине кăтартса парать тата пирĕн республикăн кăçал пурнăçа кĕртмелли пысăк та чаплă ĕçĕсене палăртать. Бюджета пурнăçа кĕртни вăл—панă укçа-тенкĕ пĕтĕмĕшпех расходлани е тупăшсем илни кăна мар-ха, бюджета пурнăçа кĕртни вăл ылханлă тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма кирлĕ пулăмлăхсене туни пулать.

Иртнĕ çулсенчи бюджетсене мĕнле пурнăçа кĕртнине Сессине çирĕплетме тăратнă отчетсенчен çакă курăнать: пирĕн Совет влаçĕн органĕсем, пирĕн халăх питех те пысăк ĕç туса ирттернĕ. Анчах та тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларни килĕшӳсĕр. Пирĕн татах ытларах ĕçлемелле-ха, ĕçри çитменлĕхсене пурне те пĕтермелле. Докладчиксем бюджета социаллă-культурăллă мероприятисем енĕпе начар пурнăçа кĕртни çинчен каларĕç. Сесси çутĕç органĕсемпе сывлăха сыхлас ĕç органĕсен руководителĕсенчен хăйсен ĕçне татăклăнах лайăхлатма ыйтма тивĕçлĕ.

Эпĕ культурăллă ĕçĕн пĕр участокĕ çинчен — искусствăпа литература çинчен чарăнса тăрасшăн. Чăнах, ку енĕпе пирĕн çитĕнӳсем те сахал мар, анчах, шел те, çитменлĕхсем те нумай-ха.

Халĕ, Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче, пирĕн писательсемпе искусство работникĕсен сасси халăха фронтра та, тылра та хĕрӳллĕн йыхăрни кирлĕ, вĕсен сасси паянхи çитĕнӳсене тума пулăштăр. Паллах, çак хĕрӳ кунсенче пысăк произведенисем çырса хатĕрлеме йывăр, анчах хальхи вăхăтри тĕп ыйтусене пур формăсемпе жанрсенче те çутатса пама май пур тата вĕсене тупма тивĕçлĕ те. Анчах чăваш писателĕсем Отечественнăй аслă вăрçă çинчен çитĕнӳсемлĕ таран çыраймарĕç-ха. Пирĕн тылри писательсем республикăри фабрикăсемпе заводсенче, транспортпа колхозсенче вăй-хала шеллемесĕр ĕçлекен геройсем çинчен нимех те параймарĕç-ха.

Пирĕн издательствăсенче халĕ те «пур енчен те лайăх» произведенисене кĕтсе лараççĕ-ха. Анчах çакă вăл сăлтав мар. Паллах, танка чарса лартма пултаракан шĕвеке тултарнă бутылка танка хирĕç пемелли хĕçпăшалран каярах тăрать. Апла пулин те çав бутылка вăрçăра кирлĕ пулчĕ, вăл хăйĕн ĕçне турĕ. Эпĕ çак тĕслĕхе илсе пирĕн писательсемпе искусство работникĕсенчен ыйтассине чăкарасшăн мар. Эпĕ çак участокра ĕçлекен юлташсене пирĕн халăхăн мухтавлă ĕçĕсене литературăпа искусствăра туллинрех хăй вăхăтĕнче çутатса памалли мĕнпур майсемпе формăсене усă курмалла тума сĕнесшĕн. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре усă пама пултаракан майсемпе пурнипе те усă курас пулать.

Искусство ĕçĕсен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Управленийĕн те, халăх творчествин Çуртĕн те, писательсен Союзĕн те, композиторсемпе художниксен те нумай ĕçлемелле-ха. Вĕсен хăйсене шанса панă участока тивĕçлипе ертсе пырас пулать, творчество коллективĕсене пухса пĕтĕçтермелле, творчество ĕçне тума хавхалантармалла, ĕçре пĕр-пĕрне пулăшассине организацилемелле, ĕçлеме майсем туса памалла, литературăпа искусство работникĕсен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатассишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшмалла.

Депутат юлташсем! Чăваш АССР-ĕн Сессире çирĕплетме тăратнă 1944 çулхи бюджечĕ пирĕн умра тăракан задачăсене тĕрĕссĕн палăртса тăрать. Бюджет Комиссийĕ сĕнекен улшăнусем пирĕн бюджетăн тĕп пахалăхне лайăхлатаççĕ кăна, çавăнпа та эпĕ çавăн пек улшăнусем тума сĕннине пĕтĕмĕшпех ырлатăп тата вĕсене çирĕплетме сĕнетĕп.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн VII-мĕш Сессийĕ вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш çуракине тухас умĕн пухăнчĕ. Пирĕн орденлă Чăваш республикинчи колхоз хресченĕсем вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе иртнĕ çул вăйлă тырпул туса илнĕшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илчĕç. Кăçал тата тухăçлăрах ĕçленипе колхозниксем ăна хăйсен аллинчех хăварасса шанса тăратпăр эпир, фронтовиксем. Кашнин ик-виçĕ çыншăн ĕçлемелле — акă мĕнле вăрçă вăхăтĕнчи виçе! Вăрçăра кашни кунах темĕн чухлĕ юн тăкăнать, сахал мар пурлăх пĕтет. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене çĕнтерес куна фронтра паттăрла ĕçсем тунипе, тылра вăя шеллемесĕр ĕçленипе хăвăртлатас пулать.

Вăрçă халь оккупантсене совет çĕрĕ çинчен пĕтĕмĕшпех тасатса çитерес тапхăра кĕчĕ. Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ ертсе пынипе Хĕрлĕ Çарăн геройла дивизийĕсем хĕвеланăçнелле куçса пыраççĕ.

Тăшмана пĕтерсе тăкатпăр.

Сталин юлташа мухтав! (**Алă çупаççĕ**).

Çуракине хатĕрленсе çитмелли фронтовой уйăхлăх

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ МАРТĂН 20-мĕшĕ ТĔЛНЕ ВĂРЛĂХЛĂХ ТЫРĂСЕНЕ ХЫВАС, ВĔСЕНЕ СОРТЛАС, ВĂРЛĂХЛĂХ ÇĔРУЛМИ ХЫВАС ТАТА ТИСЛĔК ТĂКАС ĔÇСЕМ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

Районсем	Вăрлăхлăх тырă хывни	Вăрлăхлăх тырра сортлани	Çĕрулми вăрлăхĕ хывни	Тислĕк кăларни
Улатăр	90,7	52,7	49,8	52,9
Элĕк	91,6	100,0	104,3	74,3
Вăрнар	101,9	100,0	87,7	89,0
Йĕпреç	98,0	74,9	77,8	32,1
Ишлей	80,5	100,0	99,1	70,2
Калинино	93,6	100,0	86,4	61,6
Канаш	89,4	100,0	49,9	59,7
Куславкка	93,4	100,0	100,0	49,7
Комсомольски	93,7	74,3	53,4	57,4
Красноармейски	88,0	100,0	98,7	67,9
Хĕрлĕ Чутай	92,6	100,0	76,3	56,3
Кувакино	73,2	63,6	23,3	43,8
Сĕнтĕрвăрри	107,6	100,0	95,5	57,3
Муркаш	108,0	100,0	96,3	23,5
Октябрьски	90,7	100,0	103,9	59,1
Первомайски	86,2	100,0	56,4	49,0
Пăрачкав	72,6	90,4	58,5	30,2
Советски	94,7	77,5	99,1	47,6
Сĕнтĕр	95,6	95,6	91,4	82,5
Вăрмар	104,9	100,0	106,2	60,1
Сĕрпӳ	114,6	100,0	108,4	69,4
Шупашкар	95,1	100,0	113,9	45,8
Чкаловски	88,9	100,0	32,0	46,3
Чурачăк	88,8	88,5	85,6	24,5
Шăмăршă	55,9	85,1	17,8	30,0
Шăхасан	110,3	100,0	72,9	77,0
Çĕмĕрле	76,7	100,0	52,2	55,1
Етĕрне	86,1	100,0	106,4	66,2
Елчĕк	99,7	100,0	50,3	62,8
Тăвай	95,5	100,0	77,5	50,7
Шупашкар хули	145,2	100,0	124,7	76,8

Вăкăрсене кӳлме вĕрентеççĕ

СОВЕТСКОЕ. Районри чылай колхозсем вăкăрсене ĕçе хăнăхтараççĕ. Степан Разин ячĕпе тăракан колхозра 2 вăкăра, «Красный Обрыв» колхозра 4 вăкăра, Сталин ячĕпе тăракан колхозра 6 вăкăр кӳлме вĕрентнĕ.

Н. ПАХОМОВ.

КОЛХОЗСЕН *вăрлăх фончĕ*

ÇАК КОЛХОЗНИКСЕМ — ТĂВАН ÇĔРШЫВĂН ÇУЛĂМЛĂ ПАТРИОЧĔСЕМ ХĂЙСЕН ЗАПАСĔСЕНЧЕН ВĂРЛĂХ ХЫВНĂ:

А. ПЕТРОВА — Канаш районĕнчи «Малалла» колхозăн колхозници 42 пăт тырă.

П. ПЕТРОВА — çав колхозăн колхозници — 30 пăт тырă.

А. ВАСИЛЬЕВ — Канаш районĕнчи «Красное пламя» колхоз председателĕ — 10 пăт тырă.

А. ЧЕРНОВ — Елчĕк районĕнчи «Вторая пятилетка» колхоз членĕ — 15 пăт тырă.

И. ТАРАСОВ — çав колхозăн колхозникĕ — 10 пăт тырă.

А. МУЛЛИН — çав колхозăн колхозникĕ — 10 пăт тырă.

Н. ШУЙКОВ — çав колхозăн председателĕ — 15 пăт тырă.

П. ЛЕОНТЬЕВ — Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн бригадирĕ — 12 пăт тырă.

А. ЕМЕЛЬЯНОВА — çав колхозăн бригадирĕ — 12 пăт тырă.

Д. МИХАЙЛОВ — çав колхозăн бригадирĕ — 10 тырă.

С. ПОРТНОВ — çав колхозăн членĕ—10 пăт тырă.

А. ПЛОТНИКОВ—çав колхозăн членĕ—10 пăт тырă.

А. ЕМЕЛЬЯНОВА — çав колхозăн колхозници—10 пăт тырă.

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сем ТРАКТОРСЕМ ЮСАМАЛЛИ ПЛАНА 1944 ÇУЛХИ МАРТĂН 20-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

МТС-сем	Пурĕ юсанă (процентпа)	Март уйăхĕнчи плана тултарнă (процентпа)
Красноармейскь	100,0	—
Комсомольски	100,0	—
Йĕпреç	100,0	—
Ишлей	100,0	—
Шăхасан	100,0	—
Елчĕк	100,0	—
Чкаловски	100,0	36,3
Шупашкар	100,0	—
Первомайски	100,0	166,6
Сĕнтĕр	100,0	77,7
Вăрнар	100,0	40,0
Куславкка	97,8	18,8
Элĕк	97,7	12,5
Сĕрпӳ	91,5	72,7
Вăрмар	91,4	75,0
Çĕмĕрле	88,4	75,0
Шăмăршă	88,2	57,1
Етĕрне	87,1	75,0
Сĕнтĕрвăрри	85,7	100,0
Канаш	80,8	11,1
Тăвай	78,5	114,2
Хĕрлĕ Чутай	78,2	133,3
Кувакино	76,5	55,0
Улатăр	65,1	35,1
Пăрачкав	52,3	17,6
Пĕтĕмпе	88,1	37,5
Мартăн 15-мĕшĕ тĕлне пулнă	86,2	28,0

Чыспа хисепе тивĕçлĕ пулар

МУРКАШ, мартăн 20-мĕшĕ. (**Хамăр корр.**). Республика Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулни районри колхозсене питĕ савăнтарчĕ. Колхозсенче митингсемпе пухусем пулса иртеççĕ. Правительство панă наградăна ответлесе, колхозниксем кăçал татах та лайăхрах ĕçлеме, çитес çуракине ăнăçлăн ирттерме пулаççĕ.

— Чăваш республикинчи колхозсем [illegible] — терĕ М. Ошков паллаш Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕсен митингĕнче. — Пирĕн республикăна Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ Ялавне иккĕмĕш хут памалла турĕç ĕнтĕ. 1944 çулта тата вăйлăрах тырпул туса илсе, çак пысăк наградăна тивĕçлĕ пулар.

Буденный ячĕпе тăракан колхоз кăçал вăйлă тырпул туса илессишĕн вирлĕн кĕрешет. Колхоз çуракине тухма хатĕрленсе çитнĕ. Вăрлăхсем çителĕклĕ, вĕсене сортланă. Колхоз [illegible] задание те тултарнă.

Ют çĕршывсенче

Финлянди правительстви совет̆ăн перемири тумалли условийĕсемпе килĕшмен пирки ют çĕршыв хаçачĕсем мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс» хаçат Финляндие çакна асăрхаттарать: Финлянди лару-тăрăвĕ кутăнлашса тăмалăхах çирĕп мар. «Мускав ахаль те кĕтмен çĕртен çăмăл условисем сĕннине пĕтĕм тĕнче пĕлсе тăрать. Тĕнĕл держависем кăна урăхла шутлаççĕ пулмалла. Финлянди руководителĕсем çавăн пек ăссăр ответа Мускав çăмăл условисем сĕннине кура панă пулмалла, çав условисене кура вĕсем чăркăшса тăма хăяççĕ пулас. Темĕн чухлĕ çырса тултарнă Финлянди отвечĕ, ĕнер пичетлесе кăларнăскер, Финлянди Совет правительствин условийĕсене йышăнманнине пĕлтерет. Çапла хăтланса финсем тата çăмăлтарах условисем парасса шанаççĕ пулас».

ЛОНДОН, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Ивнинг ньюс» хайĕн умстатьинче, Финлянди Совет правительствин условийĕсене йышăнманни çинчен асăнса çапла çырать: «Финлянди тĕпсĕр шурлăха путнăçемĕн путса пырать».

«Чăнахах та ĕнтĕ,—тет малалла хаçат,—финсен лидерĕсем «эпир малтанхи пекех мир тăвасса хытă шанатпăр» тесе калаççĕ, анчах та вĕсен ĕçĕ—перемири условийĕсене йышăнманни — факт пулса тăрать. Çак факт сателлитсен ытти аташуллă хухăшĕсенчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть».

ГЕТЕБОРГ, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Гетеборгс Хандельстиднинг» ятлă хаçат хăйĕн умстатьинче çакна палăртса çырать: вырăссен условийĕсене йышăнса перемири тăвасси çинчен каласма килĕшменни çинчен пĕлтерсе, «Финлянди хăйне тухса çӳреме кирлĕ алăка хупса лартрĕ».

«Гетеборгс Хандельстиднинг» ятлă хаçатăн Стокгольмри корреспонденчĕ çапла çырать: «Финлянди правительстви икĕ питленсе ĕçлет: пĕр енчен—вăл вырăссен условийĕсене сирсе ярать, тепĕр енчен—килĕшӳ тума хатĕр тăни çинчен пĕлтерет».

Венгрири лару-тăру çинчен

ЛОНДОН, мартăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Стокгольмран çапла пĕлтерет:

«Стокгольмри венгер ушкăнĕсем малтанах илнĕ хыпарсене çирĕплетсе калаççĕ. Çав хыпарсем тăрăх, Венгри регенчĕ Хорти адмирал, Венгрин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ, çар министрĕ тата главнокомандующийĕ нимĕçсен аллине тыткăна лекнĕ пек пулса тăнă. Пĕлтернĕ тăрăх, Венгрири пангермани движенийĕн лидерĕ Франц Баш Венгрире пурăнакан нимĕçсен подразделенийĕсене командир пулса ертсе пырать.

«Свенска дагбладет» ятлă хаçатăн Берн хулинчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германи çарĕсем Венгрие çакăн хыççăн йышăннă: иртнĕ эрнере Германин Будапештри посланникĕ Венгри правительствине требованисем панă. Венгрин премьер-министрĕ Каллаи çав требованисемпе килĕшмен. Требованисем çакăн пек пулнă: Венгрин тотальнăй мобилизаци туса ирттермелле; Югославие оккупаци çарĕсем ямалла; Венгри рабочийĕсене Германие ямалла тата Германие апат-çимĕçпе нĕртавар ытларах ярса тăмалла.

Каллаи çак требованисене пурне те сирсе янă. Вара Германи посланникĕ мартăн 16-мĕшĕнче ăна çапла каланă: вырăссем наступлени туса пыни Венгри территорине хӳтĕлес ыйтăва кăларса тăратать. Венгри çарĕсем, хăйсен государствине хӳтĕлеме пултараймаççĕ, çавăнпа та нимĕç чаçĕсем Венгрин стратегиллĕ пункчĕсене оккупацилеме тивĕçлĕ. Çавăн пек лару-тăрува сӳтсе-явма посланник Хортие Гитлер ставкине кайма сĕннĕ. Халлĕхе калама çук-ха: Хорти Германи требованийĕсемпе килĕшнĕ-и, килĕшмен-и, е ăна Гитлер çав требованисене йышăнтарнă-и. «Свенска дагбладет» хаçатăн Бернри корреспонденчĕ Будапештран илнĕ хыпарсем тăрăх, Венгри территорине оккупацилеме нимĕçсен ултă дивизийĕ кĕрсе кайнă.

«Дагенс нюхетер» хаçатăн Бернри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Венгрири нимĕç нацисчĕсен восстанийĕ Хорти Гитлер ставкине тухса кайсан пулнă. Имреди «квислингла» правительство тунă. Вара вăл Германирен нимĕç çарĕсене Венгрие яма ыйтнă. «Свенска дагбладет» хаçат илнĕ хыпарта çапла каланă: Венгрие оккупацилеме нимĕçсене румынсен икĕ дивизийĕ пулăшать. Нимĕç çарĕсем Венгрие Австрирен тата Румынирен кĕрсе кайнă. Çав хыпар тăрăх, Венгрире нумай районсенче çапăçусем пыраççĕ. Çитнĕ хыпарсем тăрăх, пиллĕкмĕш колонна агенчĕсем радиостанцине тытса илнĕ. Венгерсен Стокгольмри ушкăнĕсем каланă тăрăх, Австрипе Венгри чиккинче 4 пин эсэсовецпа яхăн пухса тăратнă. Анчах та Венгри командованийĕ çапла шутлать: эсэсовецсене унта Венгрипе Германи хушшинче пыракан калаçусем вăхăтĕнче венгерсене хăратса тăма, венгерсене Германи майлă пулса вăрçа тата вăйлăрах хутшăнтарасшăн кăна илсе пынă.

Венгерсен ушкăнĕсем кунта çапла шутлаççĕ: Хорти Гитлер ставкине тухса кайиччен нимĕçсем Венгри правительствине панă требованисенчен пĕри çакă пулнă: Гитлер венгерсен пысăк чаçĕсене Хĕвелтухăç фронтне яма хушнă. Венгерсем ку требованине хирĕç çапла каланă: Венгри политики — венгерсен вăйĕпе Карпат Украинин чиккисене хӳтĕлесси çеç пулса тăрать, тенĕ. Иккĕмĕш требовани çакă пулнă: Венгрие çĕнĕ Европăри суту-илӳ пĕрлешĕвĕн членĕ пулма хушнă, вара Венгри хăй тĕллĕн пĕр ют çĕршывпа та суту-илӳ килĕшĕвĕсем тумалла мар пулнă, Венгрин пĕтĕм продукцине Берлин валеççе тăмалла пулнă. Венгерсем нимĕçсен ку требованийĕпе те килĕшмен.

ЛОНДОН, мартăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Стокгольмран пĕлтернĕ тăрăх, «Нюа даглигт аллеханда» хаçатра çакăн пек тĕрĕслесе çитермен хыпар пичетлесе кăларнă: Венгрири нимĕçсен фуководителĕ Баш Венгрин премьер-министрĕ пулса тăнă.

ЛОНДОН, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Венгри агентстви паян çапла пĕлтерӳ панă: «Паян пĕр кĕске вăхăт хушши Венгри парламенчĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Парламент сессине Ташнади-Надь уçнă, вăл ларăва кайран урăх вăхăтра туса ирттерме сĕннĕ. Парламент депутачĕсен питĕ йышлă пайĕ ку сĕнӳпе килĕшнĕ. Вара Ташнади-Надь çапла пĕлтернĕ: парламент ларăвне урăх вăхăтра туса ирттеретпĕр, сессине хупатăп, тенĕ.

ЖЕНЕВА, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Нимĕç çарĕсем Венгри территорине оккупацилени çинчен Гитлер агентстви — Германи информаци бюровĕ—официально пĕлтернĕ. Çак агентство, Венгрин телеграф агентстви официально пĕлтеркĕ хыпарсем тăрăх тесе, çапла пĕлтерет: Германи çарĕсем Венгри çĕршывне «Венгрипе Германин пĕр тăшманне хирĕç пыракан кĕрешӳре Венгрие лайăхрах пулăшма» тата «малтанах пĕлсе тăрса, мĕнпур кирлĕ ĕçсене пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртмешкĕн тивĕçлĕ мерăсем йышăнма» кĕнĕ пулать. Пĕлтерӳре çапла каланă: отставкăна тухнă ĕлĕкхи правительство вырăнне регент Хорти Венгрин Берлинри посланникне Стояна çĕнĕ правительство тума хушнă. Стоян халĕ çĕнĕ правительствăра премьер-министр тата ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулса ĕçлет.

Венгрипе Румыни çарĕсем хушшинчи çапăçусем

ЛОНДОН, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Цюрихран пĕлтернĕ тăрăх (ку хыпарсене Цюрихри дипломати çыннисем Бухарестран илнĕ), Венгрипе Румыни чиккинче Венгри çарĕсемпе Румыни çарĕсем хушшинче тытăçусем пулса иртеççĕ. Ку тытăçусенчен чăшшăр тĕлĕсенче, сăмахран, Арадра тата Надь-Варадра, чăн-чăн çапăçусемех пуçланса кайнă. Çак икĕ тĕлте румынсем Венгри чикки урлă каçса кайма тăнă. Çав дипломати çыннисенчен пĕлнĕ хыпарсем тăрăхах, нимĕçсем Фекетхальми-Цейднер генерал-лейтенанта Венгрири хĕçпăшаллă вăйсен главнокомандующийĕ пулма уйăрса лартнă. Çак генерал, халăх пĕлсе тăнă тăрăх, Югославин венгерсем оккупациленĕ Нови-Сад районĕнчи Югослави халăхне питĕ тискеррĕн тыткаланă, калама çук хăрушла асаплантарнă, вăл çав ĕçсем пирки ответлă пулса тăрать. Нумаях пулмасть вăл Германие тухса тарнă пулнă, халĕ ĕнтĕ каллех Венгрие таврăннă.

Швеци хаçачĕсем Венгрири ĕçсем çинчен

ЛОНДОН, мартăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Стокгольмри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: «Морген — Тиднинген» хаçат Берлинран илнĕ шанчăклă хыпарсем тăрăх, Германи çарĕсем Венгри территорине вырсарникун, мартăн 19-мĕшĕнче, кĕме тытăннă. Пĕлтернĕ тăрăх, пĕр вăхăтра Венгрин премьер-министрĕ пулнă Бела Имреди влаçа хăй аллине тытса илнĕ, вара вăл нимĕçсене çул уçса панă. Берлинри паллă ушкăнсем çакна кĕтсе тăраççĕ: нимĕçсем Румынипе Болгарире те çавăн пекех туса хумалла.

Нимĕçсем София хулинчи почтăпа телеграфа йышăннă

ЛОНДОН, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Берн хулинчен радиосçĕм панă. Унта çапла каланă: Анкарари радио мартăн 21-мĕшĕнче каç пулсан çапла пĕлтернĕ: нимĕçсем София хулинчи почтăпа телеграфа йышăннă, тенĕ.

НИМĔÇСЕМ РУМЫНИПЕ БОЛГАРИЕ ОККУПАЦИЛЕНИ ÇИНЧЕН СĂМАХ ÇӲРЕТ

СТОКГОЛЬМ, мартăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире ирхине тухакан хаçатсем Рейтер агентствин пĕлтерĕвне — нимĕçсем Венгрие оккупациленĕ хыççăн Румынипе оккупациленĕ тесе пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Анкараран илнĕ хыпарсем тăрăх, хаçатсем, çавăн пекех нимĕçсем Болгарие те оккупациленĕ, тесе çыраççĕ.

М. Н. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН

Отечественнăй аслă вăрçăн фронтĕнче чăваш халăхĕн юратнă писателĕсенчен пĕри, çулăмлă патриот, ватă коммунист Максим Николаевич ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе чыслăхĕшĕн паттăррăн çапăçса вилнĕ.

М. Н. Данилов-Чалдунăн «Шахтăра», «Левентей масарĕ», «Ункăран», «Çулăм витĕр», «Колхоз калавĕсем», «Вут ăшĕнчен», «Çăлтăрлă çĕлĕк», «Икĕ вăй», «Тайга паттăрĕсем», «Тайгара», «Калавсем» тата юлашки вăхăтра тухнă «Фронтра» сборникĕсене пĕтĕм чăваш халăхĕ юратса вулать.

Максим Николаевич 1893 çулта Пушкăрт республикинчи Усăлă ялĕнчи хресчен çемьинче çуралнă. Çамрăклах пуяссем патĕнче тарçăра ĕçлесе пурăннă. 1910 çулта Чалдунăн çемьи Çĕпĕре куçса кайнă. 1913 çултан пуçласа Максим Николаевич Кемерово шахтинче лаша хăвалакан (коногон) пулса ĕçлеме тытăннă. Унтан забойщик, бурильщик пулса ĕçленĕ. 1915—1916 çулсенче вăл нимĕç вăрă-хурăхĕсене хирĕç çапăçнă. 1917 çулта, Октябрьти революци хыççăн, вăл, каллех Кемеровăна таврăнса, шахтăра ĕçлеме тытăнать. 1919—1920 çулсенче, граждан вăрçи вăхăтĕнче, вăл партизан пулса шурă бандăсене хирĕç çапăçать. 1921 çулта Колчак çарĕсен юлашкийĕсене пĕтерес çапăçусене хутшăнать.

1922 çулта Томскри совпартшкултан вĕренсе тухать.

1920 çултанпа Максим Николаевич литература творчествипе ĕçне пуçăнать, хăйĕн малтанхи произведенийĕсене çырать.

Ватă партизан, пурнăçра хурапа шурра пайтах тӳссе ирттернĕ писатель-коммунист, литературăра та, пурнăçра та таса кăмăллă та харсăр çынччĕ. Вăл хăйĕн произведенийĕсенче пурнăçри чи сивчĕ ыйтусене хускататчĕ, Тăван çĕршывăн кирек хăш вăхăтра та хăйсен пурнăçĕсене пама хатĕр тăракан çулăмлă патриотсене кăтартса паратчĕ. Унăн кашни произведенинех пирĕн вулакансем хапăлласа кĕтсе илетчĕç.

Пирĕн юратнă Тăван çĕршыва, Максим Николаевич хăйĕн юнне юхтарса çĕнтерсе илнĕ çĕршыва, ирсĕр тăшман килсе тапăнсан, писатель, хăй ватăлăхне пăхмасăрах, военкомата кайса хăйне фронта яма ыйтать.

Унăн «34-мĕш атака умĕн» ятлă çырупĕ пурте вуланă пулĕ. Писатель кунта хăйĕн хаярлăхĕ, çапăçури паттăрлăхĕ ăçтан çуралнине каласа парать. Нимĕç ирсĕрĕсем пирĕн чаплă хуласемпе чечеклĕ ялсене çунтараççĕ, саратаççĕ. Писателĕн вăрçă пуçланнă çул кăна аслă шкултан вĕренсе тухнă тăван ывăлне вĕлереççĕ. Мĕнле лăпкăн тӳссе тăтăр-ха ĕнтĕ совет çыннин чĕри! Максим Николаевич хăй валли пĕр çул çеç курать — вăл тавăру çулĕ, вăрçă çулĕ. Ылханлă тăшмана пĕтермеллех! Военкомат хăйне фронта ярасшăн мар пулсан та, вăл хăйĕн ĕмĕтне пурнăçа кĕртетех. Вăл фронта каять.

Тăван çĕршыв хăйĕн ирĕклĕхĕшĕн çапăçса пуçне хунă паттăр ывăлне ĕмĕрĕмĕрех асра тытĕ.

Лăпкăн çывăр пирĕн хисеплĕ юлташăмăр, писатель-большевик!

С. В. Эльгер, Н. И. Шелеби, К. И. Иванов, П. Н. Осипов, Л. Я. Агаков, Иван Мучи, А. А. Эсхель, И. С. Тукташ, Н. С. Айзман, Ф. Е. Уяр, И. С. Максимов-Кошкинский, А. Д. Калган, С. А. Шавлы, И. Т. Малгай, Н. Т. Васлина, М. Пахчаç, П. Т. Золотов, В. Л. Воробьев.

ХРОНИКА

СССР Верховный Совет Президиумĕ Георгий Николаевич Зарубин юлташа ССР Союзĕн Канадăри Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартнă.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн администрацийĕпе сотрудникĕсен коллективĕ çĕрĕç органĕсенче нумайранпа ĕçлесе пурăннă работник, Ишлей МТС-ĕн директорĕ

Павел Васильевич ВАСИЛЬЕВ

нумай вăхăт хушши йывăррăн чирлесе выртнă хыççăн кăçалхи мартăн 21-мĕшĕнче вилни çинчен чĕререн хурланса пĕлтереççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

ГТ 00092 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59X42 п. л. Тираж 14.400 экз.